**Ака уйăхĕн 29-мĕшĕ – Чăваш Республикин Патшалăх символĕсен кунĕ**






## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ГИМНĚ

Кĕвви *Г. Лебедевăн* Сăвви *И. Тукташăн*

Çурхи тĕнче вăраннă чух,
Хаваслă кун шăраннă чух
Чун савăнать, чĕре сикет,
Çĕршывăм çинчен юрлас килет.

*Хушса юрламалли:*

Тăван çĕршыв,
Тăван çĕршыв,
Асран кайми
Юратнă çĕршыв.
Тăван çĕршыв,
Тăван çĕршыв,
Мухтав сана,
Çуралнă çĕршыв!

Яшсем-хĕрсем вылянă чух,
Атте-анне ăс панă чух
Чун савăнать, чĕре сикет,
Татах та нумай пурнас килет.

*Хушса юрламалли.*

Тăвансемпе пĕрлешнĕ чух,
Чăваш тĕнчи çĕкленнĕ чух
Чун савăнать, чĕре сикет,
Татах та хастар пулас килет.

*Хушса юрламалли.*






# Чăваш Республикин Патшалăх гербĕ




Чăваш Республикин Патшалăх гербĕ сарă тата хĕрлĕ тĕссенчен тăрать.
Унта виçĕ çăлтăр, хăмла, лента, пурнăç йывăçĕ ўкернĕ.
Лента çине ылтăн сас паллисемпе «Чăваш Республики – Чувашская Республика» тесе çырнă.

# Чăваш Республикин Патшалăх ялавĕ



Чăваш Республикин Патшалăх ялавĕ сарă тата хĕрлĕ тĕссенчен тăрать.

Ялав варринче– «Пурнăç йывăçĕ» тата «Виçĕ хĕвел» - вырнаçнă.

Йывăç турачĕсем: республикăра пурăнакан чăвашсене, республика тулашĕнчи чăвашĕсене тата ытти халăх çыннисене палăртаççĕ. Çӳлти пайĕнче «Виçĕ хĕвел» ӳкернĕ. Вăл «Пулнă. Пур. Пулатпăр» «(Были. Есть. Будем.)» тенине пĕлтерет.




ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИ ◇ ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКА



# Чăваш Республикин Патшалăх гимнĕ

Илья Тукташ сăвăç



Герман Лебедев композитор



# Чăваш Республикин Патшалăх гербĕ

Чăваш Республикин Патшалăх гербĕ [redacted] тата [redacted] тĕссенчен тăрать.

Унта [redacted] хăмла, лента, пурнăç йывăçĕ ўкернĕ. Хăмла [redacted] тĕслĕ. Лента [redacted] тĕслĕ.

Лента çине ылтăн сас паллисемпе «Чăваш Республики – [redacted] тесе çырнă.

# Чăваш Республикин Патшалăх ялавĕ

Чăваш Республикин Патшалăх ялавĕ [redacted] тата [redacted] тĕссенчен тăрать.
Ялав варринче – «Пурнăç йывăçĕ» тата [redacted] [redacted] – вырнаçнă. «Пурнăç йывăçĕ» [redacted] тĕслĕ.
Йывăç турачĕсем: республикăра пурăнакан чăвашсене, республика тулашĕнчи чăвашĕсене тата ытти халăх çыннисене палăртаççĕ.